24-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 ФЕВРАЛЬ 7 ШАМАТКУН 32 (6057) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖ, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖ ХАÇАЧӖ.

Столовӑйсемпе магазинсенчи йӗркелӗхшӗн

Совет патриочӗсем, арçынсем те, хӗрарӑмсем те, фабрикӑсемпе заводсенче ывӑнма пӗлмесӗр ӗçлеççӗ. Производствӑра ӗç тухӑçлӑхне куллен ӳстерсе пырса, вӗсем Хӗрлӗ Çара пулӑшаççӗ, тыла çирӗплетеççӗ. Васкавлӑ заказсене пурнӑçланӑ çӗрте час-часах вӑхӑта шеллемесӗр, çӗрӗн-кунӗн цехран тухмасӑр ӗçлеççӗ, кирлӗ заказа срокра туса параççӗ. Рабочисене производствӑра çавнашкал пысӑк тухӑçлӑхпа ӗçлеме, ӗçри хастарлӑха куллен ӳстерсе пыма пурнӑçпа йӑла условийӗсене лайӑхлатни нумай пулӑшать. Çавна шута илсе парти, совет тата профсоюз организацийӗсен ӗççыннисен йӑла условийӗсене лайӑхлатассишӗн куллен тӑрӑшмалла. Уйрӑмӑнах столовӑйсенче, магазинсенче, ларексенче, мунчара тата йӑла ыйтӑвӗсемпе ӗçлекен ытти организацисенче те йӗркелӗх, тасалӑх туса хуни кирлӗ.

Анчах хӑшпӗр руководительсем çакна ку тарана çитсе те ӑнланса илмеççӗ. Магазинсенче куллен сутма май пур таварсемпе суту-илӳ тӑвассине те йӗркеллӗ организацилемеççӗ. Сӑмахран, Шупашкар хулинчи магазинсенче час-часах нимӗн йӗрке те пулмасть, кассӑсем умӗнче тӗркӗшсе тӑракансем чылай пулаççӗ. Магазинсенче чылай чухне тавар пулмасть. Çав вӑхӑтрах вӗсенчен çур çухрӑмра, Атӑл хӗрринче, тавар темиçе тонна йӑтӑнса выртать. Çавӑн пекех çӑкӑр сутас ӗçре те çитменлӗхсем сахал мар. Хулари халӑх валли çӑкӑр пӗçерес ӗçе йӗркелесе яман пирки темиçешер сехет хаклӑ вӑхӑта сая яма тивет.

Нумаях пулмасть Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗ Шупашкар хулинчи ӗççынни депутачӗсен Совечӗн исполкомӗн ӗçӗсем çинчен сӳтсе-явнӑ, ӗçхалӑхӗн йӑла ыйтӑвӗсемпе ӗçлекен предприятисемпе учрежденисен ӗçне халех урӑхлатса çӗнетме кирлине кӑтартса хӑварчӗ. Хула Совечӗн исполкомӗ столовӑйсене, магазинсене, мунчана тата ытти предприятисене йӗркеллӗ ӗçлеттерес тӗлӗшпе вӑхӑтра кирлӗ мерӑсем йышӑнман. Столовӑйсенче таса мар, йӗрке çук, вӗретнӗ шыв çителӗклӗ мар. Официанткӑсем апат çиме пынӑ çынсемпе час-часах кӑшкӑрса, харкашса илеççӗ. Апат-çимӗç пахалӑхне ӳсама тӑрӑшмаççӗ.

Мунчари руководительсем мунчана хӗл вӑхӑтӗнче йӗркеллӗ ӗçлеттерес тесе вӑхӑтра вутӑ хатӗрлемен пирки, мунчара черет кӗтсе тӑма тивет. Хула совечӗн исполкомӗ ӗçхалӑхӗн пурнӑçпа йӑла условийӗсене лайӑхлатас ыйтупа пӗр хут çеç мар лайӑх решенисем йышӑннӑ, анчах çав решенисем мӗнле пурнӑçа кӗрсе пынине яланлӑх комиссисем те, исполком хӑй те тӗрӗслемен. Исполком решенийӗсене мӗнле пурнӑçланине тӗрӗслес ӗçе хулари активистсемпе активисткӑсене, килхуçи хӗрарӑмӗсене явӑçтарман.

Канашри столовӑйсене илсен те çав çитменлӗхсемех палӑраççӗ. Комсомольскинче, Вӑрнарта столовӑйсемпе буфетсен хисепне сарса ӳстерсе пырас вырӑнне, вӗсене чакараççӗ. Столовӑйсенче пулакан тӑккаланчӑксемпе кирлӗ пек усӑ курмаççӗ. Ӗççыннисен апат-çимӗçне лайӑхлатас тӗлӗшпе нимӗнле мерӑсем те йышӑнмаççӗ. Столовӑйсенче, буфетсенче тарелка, кашӑк таврашӗсем çителӗклӗ мар. Çав япаласене пурне те пирӗн республикӑри предприятисемех тума пултараççӗ. Анчах вырӑнти руководительсен ӗçре çавӑрӑнӑçулӑх çук пирки столовӑйсенче чашӑк-тирӗксем çителӗксӗр.

Анчах лайӑх ӗçлекен столовӑйсемпе суту-илӳ организацийӗсем пирӗн сахал мар. Сӑмахран, Чебтерг системинче ӗçлекен 3-мӗш номерлӗ магазин малта пыракансенчен пӗри шутланать. Предприятисенчи руководительсемпе хозяйственниксем çавнашкал лайӑх примерсемпе усӑ курса хӑйсен участокӗнчи ӗçе лайӑхлатма тӑрӑшмаççӗ.

Хальхи вӑрçӑ вӑхӑтӗнче шалти ресурссене май килнӗ таран пӗтӗмпех мобилизацилесе, апат-çимӗçе лайӑхлатассишӗн кӗрешмелле. Кашни предприяти, учреждени çумӗнче подсобнӑй хуçалӑхсем организацилесе пахча-çимӗç лартса ӳстерме тӑрӑшмалла. Çавӑн пекех сыснасене çитӗнтерсе мӑнтӑрлатни, чӑх-чӗп ӗрчетни тата ӗне-выльӑхсем усрани ӗççыннисен апат-çимӗçне лайӑхлатма пулӑшать.

Пирӗн республикӑра пулӑран пуян шывсем сахал мар. Анчах пулӑ тытас ӗçе халӗ те организацилемен-ха. Ку ӗçе суту-илӳ организацийӗсемпе столовӑйсен трестӗн йӗркелесе ямаллах.

Партин, профсоюзсен вырӑнсенчи организацийӗсен столовӑйсен ӗçне куллен тӗрӗслесе тӑмалла. Столовӑйсенчи çитменлӗхсен сӑлтавӗсене тупса çийӗнчех сирсе яма тӑрӑшмалла. Столовӑйсем, магазинсем, лавкасем япӑх ӗçленине вӑрçӑ обстановкипе витме хӑтланакан руководительсене тӑрӑ шыв çине кӑлармалла. Ӗççыннисен пурнӑçӗпе йӑла условийӗсене лайӑхлатса пыма пирӗн республикӑра пур условисем те пур. Çак условисемпе çителӗклӗ усӑ курма пӗлни кана кирлӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Февралӗн 5-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Февралӗн 5-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем, противник хирӗç тӑнине тата контратакӑсем тунине сире-сире пӑрахса, малалла куçса пынӑ.

Февралӗн 4-мӗшӗнче нимӗçсене сывлӑшри çапӑçусенче 22 самолет çапса антарнӑ тата аэродромсем çинче 16 самолет пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗтӗмӗшпе çав кун противникӑн 38 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 10 самолет пӗтнӗ.

Февралӗн 5-мӗшӗнче Мускав патӗнче нимӗçсенне 9 самолет персе антарнӑ.

* * *

Февралӗн 4-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаçӗсем нимӗçсен 7 танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 250 автомашинине, боеприпассем тиенӗ 150 лавне, горючи тултарнӑ 3 автоцистернине, 33 орудине прислугисемпе пӗрле, зенитнӑй пулеметсен 7 точкине пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассем тата горючи хунӑ 2 склада сирпӗнтерсе янӑ, противник пехотин 3 батальонне сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Хӗвеланӑç фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн войскӑсем, противника хирӗç пӗр кун хушши хаяррӑн çапӑçса, халӑх пурӑнакан 6 пункта нимӗçсенчен ирӗке кӑларнӑ. Чугунçулӑн пӗр станцийӗнче пирӗн часть тӑшманӑнне боеприпассем тиенӗ 150 вагон тата 8 танк тытса илнӗ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче пирӗн боецсем гитлеровецсене халӑх пурӑнакан 3 пунктран çапса кӑларнӑ. Çапӑçу хирӗнче нимӗçсем хӑйсен салтакӗсемпе офицерӗсен 200 виллине, 5 орудине тата нумай боеприпассем пӑрахса хӑварнӑ.

* * *

Юлашки кунсенчи çапӑçусенче Безверхов командирӑн гвардейски чаçӗ, Хӗвеланӑç фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекенскер, тӑшман пехотин 3 полкне çапса аркатнӑ тата нимӗçсенне 15 танк, 460 автомашина, 5 броневик, 15 транспортер, 20 оруди, 50 пулемет, 30 миномет, 200 автомат, 500 винтовка, 7 радиостанци, 350.000 винтовка патронӗ тата медикаментсем нумай тиенӗ обоз тытса илнӗ.

* * *

Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн кавалери чаçӗ, противника хирӗç 7 кун хушши çапӑçса, нимӗçсенне 2 самолет, 8 оруди тата тӗрлӗрен çар грузӗсем тиенӗ 150 автомашина пӗтерсе тӑкнӑ. Кавалеристсем тӑшманӑнне 52 мотоцикл, 10 пулемет, 153 винтовка, 60 лаша тытса илнӗ. Противник хӗйӗн салтакӗсемпе офицерӗсене 600 çынна ытла çухатнӑ.

* * *

Утлӑ разведчиксем Цицаров, Васин, Грачев, Гаврилов тата Федотов юлташсем, Иванин сержант ертсе пынипе, противникӑн тылӗнче Кузница ялӗ патӗнче пулнӑ чухне, çул тӑрӑх нимӗçсен обозӗ куçса пынине асӑрханӑ. Разведчиксем противника çывӑха пыма панӑ та ун çине ручной пулеметпа автоматсенчен пеме пуçланӑ. Кӗтмен çӗртен пырса тапӑннипе сехри хӑпнӑ нимӗçсем паникӑна ӳксе тарса пӗтнӗ, çул çине хӑйсен салтакӗсен 30 виллине пӑрахса хӑварнӑ. Хӑюллӑ разведчиксем, нимӗçсен икӗ салтакне тыткӑна илсе, ручной пулемет, 2 автомат, 11 винтовка тата 2 лаша тытса илсе хӑйсен штабне таврӑннӑ.

* * *

Ленинград облаçӗнчи партизансем тӑшмана халран ярса пыраççӗ, унӑн хӗçпӑшалӗпе чӗрӗ вӑйне пӗтере-пӗтере тӑкаççӗ. Партизансен К. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ çак кунсенче К. тата З. пункчӗсем хушшинчи çул çине минӑсем хурса тухнӑ. Минӑсем çине пырса тӑрӑнса, пехота ларса пыракан 2 грузовой автомашина сирпӗнсе кайнӑ. Нимӗçсен 30 ытла салтакӗ вилнӗ тата аманнӑ. Çав çул çинчех партизансем, тӑшманӑн продовольстви турттарса пыракан обозӗ çине пеме пуçласа, нимӗçсен 46 салтакне вӗлернӗ.

* * *

Нимӗçсен 35-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 35-мӗш артиллери полкӗнчи 6-мӗш батарейӑран тыткӑна лекнӗ ефрейтор Гельмут Гофман çапла каласа панӑ: «Кашни яла юлашки салтак юлмиччен хӳтӗлеме мӗнпур чаçсене çирӗп приказ панӑ. Офицерсене çапла асӑрхаттарса хунӑ: кам та кам приказ илмесӗр каялла чакать, çавсенчен кашнине военно-полевой суд аллине параççӗ, тенӗ. Анчах çакна пӑхмасӑрах 35-мӗш дивизири разведчиксемпе артиллеристсенчен пухса йӗркеленӗ батальон, ӑна кирек мӗнле майпа та пулин позицие тытса тӑма приказ панӑ пулсан та, васкасах каялла чакнӑ. Батальон командирне Мандельшлос майора вӗлернӗ. Хӑйсен ирӗкӗпе каялла чакассисем юлашки вӑхӑтра час-часах пулса иртеççӗ. Пехотнӑй чаçсенче пулеметчиксем çитмеççӗ. Нумаях пулмасть артиллери полкӗнчен пулеметран пеме пултаракан мӗнпур салтаксене чӗнсе илнӗ. Пехотнӑй чаçсем кӑна мар, артиллери чаçӗсем те пысӑк çухатусем тӳсрӗç. Артполкӑн иккӗмӗш дивизионӗнче 192 çын пулнӑ. Халӗ унта 90 çын кӑна тӑрса юлнӑ. 105 миллиметрлӑ 12 орудирен 2 оруди кӑна тӑрса юлнӑ. Германи çарӗн лару-тӑрӑвӗ çавтери йывӑр. Халӗ ӗнтӗ тӑм илсе янӑ салтаксене лазаретсене йышӑнмаççӗ. Тӑм илсе янӑ салтаксем питӗ нумай, вӗсене медицина персоналӗ пӑхса çитерейместь. Медицина персоналӗ аманнисен çавтери пысӑк йышне пӑхнӑ çӗрте ӗçлет, тӑм илсе янисене пулӑшу пама пултараймасть».

* * *

Противникран тытса илнӗ документсем хушшинче 4-мӗш мотострелковӑй полкри 2-мӗш ротӑн командирӗ Клейнзорген лейтенант «Декабрӗн 24-мӗшӗнчи çухатусем çинчен» çырнӑ донесение тупнӑ. Лейтенант çапла пӗлтерет: пӗр кун хушшинче рота составӗнчи пӗр офицерпа пӗр салтак вилнӗ; пӗр офицерпа пӗр салтак аманнӑ; пӗр офицерпа пӗр салтак пӗр хыпарсӑр çухалнӑ. Итогсене пӗтӗçтермелли «ротӑн юлашки вӑхӑтри çухатӑвӗсем» текен графара лейтенант çакӑн пек цифрӑсем çинчен пӗлтерет: «Унтер-офицерсемпе рядовойсем 60 çын вилнӗ, 118 çын аманнӑ, 7 çын пӗр хыпарсӑр çухалнӑ».

* * *

Пирӗн чаçсем хӗснипе Тула облаçӗнчи Арсеньевски районри Клодези ялӗнчен тухса кайнӑ чухне фашистла ирсӗрсем çав яла мӗнпур енчен вут тивертнӗ. Пӗтӗмпе 38 кил, колхозӑн выльӑх картисем, ялхуçалӑх машинисем вутра çунса кайнӑ. Гитлерла бандитсем мӗнпур колхозниксенчен çӑматӑсене, выльӑх-чӗрлӗхсене, кайӑк-кӗшӗксене тата пӗтӗм килти япаласене илсе тухса кайнӑ. Нумай колхозниксене фашистсем пушӑла хӗнесе пӗтернӗ.

* * *

Германире шатраллӑ тиф чирӗ вӑйлӑн сарӑлса пырать. Чирлисене вырнаçтарма Германи влаçӗсем гостиницӑсемпе пысӑк çуртсене турта-турта илеççӗ. Медицина енчен пулӑшу çителӗксӗр пулнӑ пирки тата эмелсем çук пирки, çавӑн пекех выçлӑха пула чирлисен организмӗ питех те начарланса çитнӗ пирки çынсем çавтери нумай вилеççӗ. Пӗр Гамбург хулинче кӑна каçалхи январь уйӑхӗнче шатраллӑ тиф чирӗпе 960 çын вилнӗ. Тифпа чирленӗ салтаксем уйрӑмах нумай вилеççӗ, вӗсем валли госпитальсем Польшӑра тунӑ. Тиф чирӗ çавӑн пек хӑрушшӑн сарӑлса кайнине пула, фашистсен «Гамбургер фремденблат» хаçачӗ февралӗн 2-мӗшӗнче Гамбург институчӗн директорӗ Мюлнес профессор чӗнсе каланине пичетленӗ. Мюлнес профессор Германи халӑхӗнчен сывлӑх органӗсене шатраллӑ тиф чирӗпе кӗрешнӗ çӗрте пулӑшу пама ыйтать.

Февралӗн 6-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Февралӗн 6-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн войскӑсем нимӗçсен фашистла войскисене хирӗç активлӑн çапӑçнӑ.

* * *

Снязов командир ертсе пыракан пирӗн часть (Хӗвеланӑç фрончӗ) икӗ кун хушшинчи çапӑçусенче тӑшманӑнне 36 пулемет, 3 оруди, 3 миномет, радиостанци, нумай снарядсем тата ытти трофейӑсем тытса илнӗ. Çапӑçу хирӗнче нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсем 300 çын ытла вилсе юлнӑ.

* * *

Маслов юлташ командир пулса тӑракан пирӗн часть, Кӑнтӑр-Хӗвеланӑç фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекенскер, тӑшманӑн йывӑçпа çӗртен купаласа тунӑ 5 огневой точкипе блиндажне, минометсен 3 батарейине тата 5 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ. Противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсем вилсе тата аманса 50 çын пӗтнӗ. Трофейӑсемпе тыткӑна илнисем пур.

* * *

Цаплин подразделенийӗнчи красноармеецсем-автоматчиксем, тӑшманӑн вӑйлӑн хирӗç тӑракан чаçӗн тылне тарӑн юр тӑрӑх систермесӗр кӗрсе кайса тата противникӑн огневой точкисене пусӑрса лартса, атакӑна ыткӑннӑ. Çапӑçу хирӗнче хӑйсен салтакӗсемпе офицерӗсен 40 виллине ытла пӑрахса хӑварса, нимӗçсем тарнӑ.

* * *

К. ялӗшӗн пынӑ çапӑçура старшина К—тов тӑшманӑн орудине тытса илнӗ те, ӑна чакакан противник çинелле çавӑрса, тӳррӗн персе, тӑшманӑн танкне çӗмӗрнӗ тата нимӗçсен пехотин взводне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑç фрончӗн участокӗсенчен пӗринче, С. ялӗ патӗнче, нимӗçсен каялла чакакан чаçӗ, пирӗн войскӑсен наступленине тытса чарас тесе, контратака пуçласа янӑ. Гитлерла бандитсем, совет боецӗсен пульлисенчен хӳтӗленес тесе, хӑйсен умӗнче совет граждӑнӗсене 30 çынна яхӑн — хӗрарӑмсемпе стариксене тата ачасене хӑваласа пынӑ. Кӗçӗн лейтенант Ершенин тата кӗçӗн политрук Гончаров юлташсем, пирӗн автоматчиксен группипе пӗрле, тӑшмана флангсенчен пырса атакӑланӑ. Гитлеровецсене пӗтерсе тӑкнӑ. Стариксемпе хӗрарӑмсем тата ачасем сиенленмесӗр юлнӑ.

* * *

Украина партизанӗсен К. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ засадӑра ларнӑ çӗртен нимӗç салтакӗсен пысӑк колонни çине пеме тытӑннӑ. Пулеметсемпе автоматсенчен пур енчен те персе тӑрса, гитлеровецсен салтакӗсемпе офицерӗсене 150 çынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Нимӗçсен 88-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 245-мӗш полкӗнчи 3-мӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ салтак Эмиль Шмидт çапла каласа панӑ: «Пирӗн дивизие Францирен декабрӗн 2-мӗш çурйӑхӗнче куçарса килчӗç. Салтаксем çакӑншӑн питех те кӑмӑлсӑр пулчӗç. Икӗ салтак хӑйсем тарӑхнине, вӗсем Российӑна каясшӑн маррине уççӑнах пӗлтерчӗç. Вӗсене çавӑнтах арестлерӗç. Францирен тухса киличчен 5 кун малтан икӗ салтак тарчӗ. Вӗсенчен пӗрине тытнӑ тесе калаçатчӗç. Кун хыççӑн вара пире дезертир пулса тарнишӗн персе пӑрахасси çинчен калакан приказа вуласа пачӗç. Российӑра эпир питех те йывӑр положение кӗрсе ӳкрӗмӗр. Нумайӑшӗсем чире кайрӗç. Эпӗ те чирлерӗм, анчах командир мана çапла каларӗ: нихӑма та лазарета яма пултараймастӑп, пурин те çирӗппӗн чӑтса тӑмалла, терӗ. Январӗн 14-мӗшӗнче çакӑн пек ӗç пулса иртрӗ: 3-мӗш ротӑн 2-мӗш взводӗнчи салтак рота командирӗ патне пынӑ та çапла пӗлтернӗ: «Кун пек пурнӑçа эпӗ текех чӑтса тӑма пултараймастӑп. Эпӗ 6 ача ашшӗ, анчах мана пурте йӑлӑхтарса çитерчӗ, маншӑн халӗ кирек мӗн пулсан та пурӗ пӗрех», тенӗ. Вӑл вара юр çине выртнӑ та командиртан ӑна персе пӑрахма ыйтнӑ. Юлашкинчен çапах та ӑна ура çине тӑратрӗç те малалла хӑваласа кайрӗç. Кайран пӗр пӳртре çав салтакӑн виллине тупрӗç Юлашки кунсенче рота командирӗ старший лейтенант Ротбаузр хӑй те питӗ туллашатчӗ. Вӑл салтаксене пуçтарас тесе килӗрен килле çӳретчӗ те çапла калатчӗ: Хамӑн ротӑпа эпӗ нимӗн те тума пултараймастӑп, манӑн 55 çын вилчӗ, 25 çын аманчӗ, темиçе çынна питех те вӑйлӑ тӑм илсе янӑ, вӗсене эпӗ ӑсатма пултараймастӑп. Мӗн тумалла-ха ӗнтӗ манӑн? тетчӗ».

* * *

Нимӗçсен 17-мӗш дивизийӗн 55-мӗш пехотнӑй полкӗнчи 10-мӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ обер-ефрейтор Карл Мутти çапла каласа панӑ: «Декабрӗн пуçламӗшӗнче мана амантрӗç. Мана обоза ячӗç. Уйӑх иртсен эпӗ хамӑн чаçа таврӑнтӑм та пирӗн ротӑра 80 салтак вырӑнне 20 салтак кӑна тӑрса юлнине куртӑм. Пӗр уйӑх хушшинче рота 60 çын çухатнӑ».

* * *

Ново-Павловка ялӗнче (Харьков облаçӗ) гитлерла вӑрӑ-хурахсем 11 колхозника, вӗсем офицера нимӗçсен салтакӗсем пӗр чарӑкусӑр çаратса пусмӑрлани çинчен каласа панӑшӑн, çакса вӗлернӗ.

Оборона фондне тӗреклетме

Предприятисемпе учрежденисенче ӗçлекенсем Хӗрлӗ Çара куллен ытларах та ытларах пулӑшса пыраççӗ, тӑван çӗршыв оборонин фондне тӗреклетессишӗн тӑрӑшаççӗ. Иртнӗ канмалли кун, февралӗн 1-мӗшӗнче, партин Шупашкар хула комитечӗ учрежденисемпе предприятисенче ӗçлекенсене организацилесе воскресник туса ирттерчӗ. Воскресникке пур предприятисемпе учрежденисем те хутшӑннӑ. Пысӑк предприятисене шутламасӑр, пурӗ 10.000 тенкӗлӗх ытла ӗçлесе илсе оборона фондне панӑ. Уйрӑм предприятисемпе учреждени коллективӗсем воскресникке питӗ активлӑн хутшӑннӑ. Сӑмахран, индпошив артелӗн коллективӗ, 770 тенкӗлӗх ытла ӗçлесе, укçине пӗтӗмпех оборона фондне куçарнӑ. Çавӑн пекех кирпӗч заводӗнче ӗçлекенсем, спирт завод коллективӗ тата хулари ытти учрежденисемпе предприятисем те воскресникре хастарлӑн ӗçлесе, оборона фондне тӗреклетме пулӑшнӑ.

* * *

ÇЕМЕРЛЕ («Чӑваш Коммуни» корр.). Районри рабочисемпе служащисем тата инженерно-технически работниксем январӗн 30-мӗшне оборона фонде пӗтӗмпе 442 пин тенкӗ ытла хывнӑ. Вӑл шутран 1942 çулти январь уйӑхӗнче 54.269 тенкӗ хывнӑ.

Кунсӑр пуçне тата районри ӗççыннисем оборона фондне 223 пин тенкӗлӗх заем облигацийӗсем, çӗршер центнер тӗштырӑ, аш-какай т. ыт. ялхуçалӑх продукчӗсем чылай панӑ.

Оборона фондне укçа-тенкӗ, заем облигацийӗсем, ялхуçалӑх продукчӗсем парас ӗç малалла та ӑнӑçлӑн пулса пырать.

А. И. МИКОЯН ЮЛТАШ.

СССР Верховный Совет Президиумӗн, ВКП(б) Центральный Комитечӗн тата СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн постановленийӗ тӑрӑх А. И. Микоян юлташа Оборонӑн Государственнӑй Комитечӗн составне кӗртнӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче нумаях пулмасть Комсомольски районра çуракине хатӗрленес ӗç мӗнле пыни çинчен райсовет исполкомӗн председателӗ Харитонова, райçӗрӗç пайӗн заведующийӗ Казаков тата МТС директорӗ Ширкадинов юлташсен доклачӗсене итленӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ 1942 çулти ялхуçалӑх ӗçӗсене туса ирттерме хатӗрленесси пирки йышӑннӑ постановление Комсомольски районра питех те çителӗксӗр пурнӑçа кӗртсе пыраççӗ.

Февралӗн 1-мӗшӗ тӗлне районра тӗштырӑсен вӑрлӑхӗсене 68 процент хатӗрленӗ. Çав хисепрен ку вӑхӑта çитсе пӗтӗмпе те 7 процент çеç сортланӑ. Районри Совет исполкомӗн председателӗ Харитонова тата райçӗрӗç пайӗн заведующийӗ Казаков юлташсем районра вӑрлӑхсем хатӗрлесе çитернипе çитерменни çинчен тӗплӗн пӗлмеççӗ, вӑрлӑхсем хатӗрлес ӗç çине çавӑрӑнса пӑхмаççӗ, вӑрлӑхсен пахалӑхне тӗрӗслеме пачах тытӑнман.

Вӑрлӑх тасатмалли машинӑсем районта пурӗ 40. Вӗсемпе тивӗçлӗн усӑ курмаççӗ, çав машинӑсен маршрутӗсем çук, «Пролетарий» колхозра ӗçлеме юрӑхлӑ триер ӗçлемесӗр ларать, çав вӑхӑтрах колхоз хӑйӗн вӑрлӑхне пачах сортламан.

Партипе правительствӑн постановленийӗсене пачах та çителӗксӗр пурнӑçланӑшӑн Чӑваш АССР Совнаркомӗ Комсомольски район Совечӗн исполкомӗн председательне Харитонова юлташа тата райçӗрӗç пайӗн заведующине Казаков юлташа асӑрхаттарса вӗсене çуракине хатӗрленес ӗçе халех вӑйлатма хушса хӑварчӗ. Вӑрлӑхсене районра мартӑн 15-мӗшӗ тӗлне пур культурӑсем енӗпе те хатӗрлесе çитермелле, халех вӗсене тасатма тытӑнмалла, сортлакан машинӑсене талӑкне 15 сехет ӗçлеттермелле, ялхуçалӑх машинисене юсас ӗçе лайӑхлатмалла, авӑн çапассипе клевер вӑрлӑхӗсене тасатассине график тӑрӑх туса пымалла, колхозниксем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗçпе социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ямалла.

Çуракине большевикла хатӗрленер

Кольцовкӑри колхозниксен чӗнӗвӗ çине ӗçпе ответлеççӗ

СӖНТӖРВӐРРИ. (Телефон тӑрӑх). Пур колхозсенче те Кольцовкӑри колхозниксемпе колхозницӑсем республикӑри мӗнпур колхозниксене чӗнсе каланине сӳтсе-яваççӗ. «Хӗрлӗ Çар» колхозра Кольцовкӑри колхозниксен чӗнӗвне сӳтсе-явнӑ хыççӑн çуракине татах та тимлӗнрех хатӗрленме пуçларӗç. Паянхи кун тӗлне вӑрлӑх валли уйӑрса хунӑ пур культурӑсене те йӑлтах сортласа çитернӗ. Уя тислӗк 600 тонна кӑларнӑ, плугсене пурне те юсанӑ. Халь колхоз торф хатӗрлесе турттарма тытӑнчӗ, ялхуçалӑх машинисене васкасах юсаççӗ, инвентарьсене хатӗрлеççӗ.

Районри ытти колхозсенче те, Кольцовкӑри колхозниксен чӗнӗвне сӳтсе-явса, çуракине тимлӗн хатӗрленме тытӑнчӗç. Пур колхозсенче те çуракине хатӗрленнине тӗрӗслеме ятарласах бригадӑсем уйӑраççӗ.

БОРЗОВ.
ВКП(б) Сӗнтӗрвӑрри райкомӗн секретарӗ.

„Пинер“ тата „Прожектор“ колхозсенче

ШАХАСАН. Çӗнӗ Пинерти «Пинер» колхоз, иртнӗ çулта агротехникӑллӑ мероприятисене кӑтартуллӑн пурнӑçласа пырса, пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илчӗ. Колхозниксем кӑçал татах та тухӑçлӑрах тырпул туса илессишӗн тӑрӑшаççӗ. Колхоз çуртырри вӑрлӑхӗсене халь пӗтӗмпех сортласа хунӑ, ялхуçалӑх машинисемпе транспорт инвентарӗсене юсанӑ. Халь колхозниксем уйра юр тытаççӗ, тислӗк турттараççӗ тата ытти тӗрлӗ удобренисем те пухса хатӗрлеççӗ.

Çӗнӗ Чалкасси ялсоветне кӗрекен колхозсем те, иртнӗ çулти ялхуçалӑх ӗçӗсене ӑнӑçлӑн вӗçленӗ хыççӑн, кӑçалхи çуракине тимлӗн хатӗрленме тытӑнчӗç. «Прожектор» колхоз 60 гектар çинче юр тытнӑ, ялхуçалӑх машинисене юсаса çитернӗ. Халь колхозниксем вӑрлӑхсене сортлаççӗ. Çакнашкалах Калинин ячӗпе тӑракан колхозра та 35 центнер вӑрлӑх сортласа хатӗрленӗ, 30 гектар çинче юр тытса купалантарнӑ. Халь ялхуçалӑх машинисене юсаççӗ.

В. ЯКОВЛЕВ.

„Восток“ колхозра

ЕТӖРНЕ. «Восток» колхоз членӗсем хальхи вӑхӑтра нихӑçанхи пек мар хастарлӑн ӗçлеççӗ, тӑшмана çӗнтерме паттӑр Хӗрлӗ Çара мӗн кирлине пӗтӗмпех туса парассишӗн ырми-канми ӗçлеççӗ.

Колхоз, ялхуçалӑх ӗçӗсене йӗркеллӗн вӗçлесе, государство умӗнчи парӑмсене пурне те вӑхӑтра парса татрӗ. Колхозниксем, Çӗрпӳ районӗнчи «Цивильстрой» колхоз членӗсен чӗнӗвне ырласа, Хӗрлӗ Çар валли хӑйсен килӗсенче сыснасем, сурӑхсем, чӑх-чӗпсем тӑрантарса самӑртма тытӑнчӗç. Колхоз хӑй пӗр вӑкӑр тата пӗр сысна самӑртса пама йышӑнчӗ.

Колхозниксем Хӗрлӗ Çар боецӗсем валли 20 килограмм çӑм, кӗрӗк пиншаксем, çӑматӑсем, перчаткӑсем, носкисем тата ытти ӑшӑ япаласем те нумай пачӗç. «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 500 тенкӗ укçа пухрӗç.

Халӗ «Восток» колхоз çуракине хатӗрленнӗ май уя 900 лав тислӗк кӑларчӗ, 10 лав чӑх-чӗп тислӗкӗ хатӗрлерӗ. Вӑрлӑхсене тасатас ӗç хӗрӳллӗн пырать.

Колхозниксем фронта, çӗршыва ялхуçалӑх продукчӗсем ытларах та ытларах туса парассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗçлеççӗ.

Т. ЯРАНДАЙКИН.

Машинӑсене хатӗрлесе çитертӗмӗр

ЕТӖРНЕ. Аптышкассинчи колхоз кӑçал акса хӑварма кирлӗ вӑрлӑхсене хатӗрленӗ хыççӑн нимрен малтан хӑйӗн ӗç хатӗрӗсене юсама тытӑнчӗ. Паянхи кун тӗлне колхоз 12 плуг, 15 сӳре, пӗр сеялка юсарӗ, халь урапасемпе ут таврашсене хатӗрлеççӗ.

М. ПАВЛОВ.

СССР, Великобритания тата Иран пĕр-пĕринпе тунă союзлă договор çинчен Иран хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

ТЕГЕРАН, февралĕн 5-мĕш. (ТАСС). «Иран» хаçат СССР, Великобритани тата Иран пĕр-пĕринпе тунă союзлă договор çинчен умстатья пичетлесе кăларнă.—Çак договора туни,—тенĕ статьяра,—Иранпа унăн кÿршисем хушшинчи, СССР Союзĕпе Англи хушшинчи, çыхăнусенче çĕнĕ тапхăр пуçласа ярать. Иранпа çак çĕршывсем хушшинчи çыхăнăва договор ку таранччен пулнинчен те ытларах çирĕплетет. Совет Союзĕпе Англи представителĕсем каласусем ирттернĕ тата договорсем тунă чухне ырă шухăшлă пулнине кăтартрĕç. Çакă вăл —вĕсен правительствисем, пĕтĕм тĕнчипе ирĕклĕх тăвассишĕн тата демократи никĕсĕсене çирĕплетессишĕн паттăррăн кĕрешекенскерсем, ку тĕлĕшрен те çавăн пек шухăшпах хавхаланнине кăтартакан лайăх тĕслĕх пулать.

«Эстанла» хаçат союзлă договор çинчен çырнă умстатьяра: ютçĕршыв ĕçĕсен министерствинче пулнă банкетра Совет посолĕпе Англи посолĕ каланă туслă сăмахсене Иранри общественность ырă кăмăллă пулса йышăнса илчĕ, тесе кăтартса парать.—Мĕншĕн тесен, çак сăмахсем вĕсем, договорăн пĕрремĕш статьинче Иран территорийĕн тĕрĕс-тĕкеллĕхĕ, политикăллă никама пăхăнманлăхĕ тата суверенитечĕ тĕлĕшпе каланă положенисене çирĕплетеççĕ кăна мар, тата вĕсем çак икĕ державăн правительствисем Иран халăхĕ çине ырă кăмăллă пăхнине кăтартаççĕ.

— СССР посолĕ,—тет малалла хаçат,—Совет правительствин руководителĕ юлашки вăхăтра каланă сăмахĕнчен çак вырăна илсе кăтартрĕ:

«Ют территорисене тытса илес, ют халăхсене пусмăра чиксе тĕллевсем вăрçăра пирĕн çук тата пулма та пултараймаççĕ,—сăмах кунта Европăри халăхсемпе территорисем çинчен пырать-и, е Азири, çав шутрах Иранри, халăхсемпе территорисем çинчен пырать-и,—çакă вăл пурпĕрех». Уççăнах курăнать ĕнтĕ, çак сăмахсем историллĕ тата официальнăй акт пулса тăраççĕ,—çав акт Иранпа кÿршĕллĕ тата туслă государствăн тулашри политикин тĕп тупсăмне уçса кăтартать, çав акт вăл союзлă державăсен руководителĕсем пирĕн территорин тĕрĕс-тĕкеллĕхне тата унăн никама пăхăнманлăхне сиен кÿме пултаракан нимĕнле тĕллев те тытманнине çирĕплетсе парать».

Хаçат çавăн пекех Англи посланникĕ: союзниксен шухăшĕсене договорта яруççăн çырса кăтартнă тата союзниксен шухăшне çак договортан иртсе каякан нимĕнле шухăш та кĕмест, тесе каланине те паллă тăвать.

— Çапла ĕнтĕ,—тет юлашкинчен хаçат,—пирĕн хушăра тухма пултаракан ăнланманлăхсем пурте яланлăхах пĕтрĕç. Халĕ ĕнтĕ виçĕ держава хушшинчи çыхăнусем пĕр-пĕринпе туслă пурăнас тата пĕр-пĕрне хисеплес принципсем çинче никĕсленсе тăраççĕ.

Англия Абиссинипе договор тунă

ЛОНДОН, февралĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: авторитетлă учреждениссенче пĕлнĕ хыпарсем тăрăх, январĕн 31-мĕшĕнче Аддис-Абеба хулинче Англипе Абиссини договорне алă пуснă. Çав договор тăрăх, Абиссини территорийĕнчен Итали оккупанчĕсене хăваласа кăларнă май, Англипе Абиссини хушшинчи çыхăнусем çĕнĕлле йĕркеленсе каяççĕ. Англин Аддис-Абеба хулинчи посланникĕ пулса ĕçлеме Хоуна уйăрса лартнă. Абиссини негусĕ Англи правительствинчен Абиссинире администраци аппаратне йĕркелеме техникăлла советниксем тата темиçе чиновник яма ыйтнă. Англипе Абиссини договорне 2 çуллăх тунă пулĕ тесе шутлаççĕ Лондонра. Англи правительстви негуса малтанхи çулталлăк хушшинче пĕр миллион çурă кĕрепенке стерлинг, иккĕмĕш çулталăкĕнче пĕр миллион кĕрепенке стерлинг кивçен пама килĕшнĕ.

Дани дипломачĕсем Дани правительствине пăхăнми пулнă

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 5-мĕш. (ТАСС). Кунта паллă пулнă тăрăх, Данин Англири посланникĕ, Данин США-ри посланникĕ тата Дани ĕçĕсен повереннăйĕ Дани правительствин приказĕсене пурнăçа кĕртсе пыма пăрахнă. Вĕсем çапла Дани правительстви пĕтĕмĕшпех гитлерла Германие пăхăнса тăнă пирки çапла тунине кăтартса параççĕ. Дани дипломачĕсем малашне хăйсем ирĕклĕ те никама пăхăнман Данин представителĕсем пулни çинчен пĕлтернĕ.

Пĕлтернĕ тăрăх, Данин Аргентинăри посланникĕ те, пĕр вăхăтрах Данин Уругвайри, Чилири тата Боливири ĕçĕсене те туса пыраканскер, çавăн пекех тата Данин Мексикăри ĕçĕсен поверенăйĕ те çулте кăтартнă сăлтавсене пулах Дани правительстви хушнисене туса пыма пăрахнă.

Германипе Итали агенчĕсен Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сăтăрла ĕçĕсем

СТАМБУЛ, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Авторитетлă вырăнсенчен илнĕ сведенисем тăрăх, çак вăхăтра Турци влаçĕсем Рашид Али Гайлани Берлина мĕнле тухса тарнине тĕпчеççĕ. Çав сведенисемех Рашид Али Гайланин юлашки çулсенчи ирсĕр ĕçĕсене кăтартса параççĕ. Иртнĕ çулта Иракра Англи войскисем çĕнтернĕ хыççăн Гайлани Стамбула тарса пынă. Унта пырсанах вăл «пĕр ютçĕршыв» представителĕсемпе таччăн çыхăнса, Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче сăтăрла ĕçсем туса тăма Иракран тата Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи ытти государствăсенчен куçса пынă эмигрантсене хăй тавра пуçтарма тытăннă.

Тĕнĕл держависен (Германи, Итали тата ытти те) агентури 1940 çулти çуркуннеех пуçласа Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи государствăсенче йĕркесĕрлĕхсем кăларма хăтланнине тата тĕнĕл держависене хирĕç тăракан политикăллă пысăк деятельсене сирсе яма тăрăшнине пурте пĕлеççĕ. Çапла вĕсем 1940 çулăн пуçламăшĕнче Багдадра Иракăн финанс министрне Рустам Хайдара револьвертан персе вĕлернĕ. Çак ĕçе хăй вăхăтĕнче Ирак влаçĕсем тĕпчесе тухни çакна кăтартса панăччĕ: финанс министрне вĕлерни — Иракра пăлхав тапратса ямаллине систерекен сигнал пулнă. Ку пăлхава Ирак çарçынни ушкăнĕсен итальянецсен Багдадри миссийĕпе таччăн çыхăнса тăракан хăшпĕр представителĕсем пуçласа яма шутланă.

1940 çулти май уйăхĕнче Мекка хулинче Саудиди корольне Ибн-Саида вĕлерме каварлашнă çынсен ушкăнне тупнă. Ку ирсĕр ĕçе тума организацилекенни Саудидири политикăллă деятельсенчен Абдул Хамид пулнă. Ĕçе тĕпчесе пĕлнинчен Абдул Хамид 1939 çулта çуллахи вăхăтра Германире пурăнса иртнĕ ни палăрнă, Багдадра вăл пăлхав тумалли хатĕр планпах таврăннă пулнă. Тĕнĕл держависен агентури Ибн-Саид короле юлашки вăхăтченех вырăнтан сиресси шĕн тăрăшнă. Саид Аравийĕн правительстви çакăн пирки ĕнтĕ темиçе уйăх каярах Германипе тытса тăракан дипломатиллĕ çыхăнусене татасси çинчен тата Германи посланникне Горбба çĕршывран кăларса ярасси çинчен йышăннă.

Турци влаçĕсем Рашид Али Гайланин хальхи ĕçĕсене тĕпчесе тухнинчен мĕнмĕн палăрнине никама та пĕлтермен-ха. Анчах та çак кунсенче Стамбулра тата Анкарара 20 çынна яхăн тытса хупнă. Арестленисем хушшинче ытти государство çыннисем те пур. Вĕсем пурте Рашид Али Гайланипе çыхăнса тăнă çынсем пулни çинчен пĕлтереççĕ.

Турцири хаçат Болгари пичечĕ вăрçă пуçлама чĕнни çинчен

АНКАРА, февралĕн 4-мĕш. (ТАСС). Турцири хаçатсем Болгарин хальхи вăхăтри политики çинчен тата Болгари пичечĕн агрессиллĕ кампанийĕ çинчен питĕ нумай çыраççĕ.

«Анадолу» хаçат Орхан Рахми статьине пичетлесе кăларнă. Орхан Рахми çапла çырать: юлашки кунсенче Болгарин хăшпĕр деятелĕсем ытла палăрмаллах мар, оптаруллăрах сăмахсемпе Болгарин вăрçа хутшăнма кирли çинчен калаçма пуçларĕç. Çав тĕллевсене пурнăçа кĕртме Болгарин государство деятелĕсем хăйсен халăхне жертвăсем тума хатĕр тăмашкăн чĕнеççĕ.

Малалла автор: Болгари хаçачĕсем хăш çĕршыва хирĕç вăрçă пуçласа има чĕнеççĕ-ши, тесе ыйтса, хальхи вăхăтра Болгария Турцие хирĕç вăрçă пуçласа яма хатĕрленет, тесе вывод тăвать.

Италири лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 2-мĕш. (ТАСС). «Чикаго дейли ньюс» хаçатăн нумаях та пулмасть Европăн вăтаçĕрĕнчи пайĕнчен таврăннă корреспонденчĕ çапла çырать: Италири лару-тăру гитлеровецсем оккупациленĕ ытти çĕршывсенчи лару-тăруран питех уйрăм мар. Нимĕçсем Италири продовольствипе ытти таварсене пуçтарса илсе тухса кайнă. Итали халăхĕ хăй кăмăлсăрланнине палăртса пырать. Ăна вăрçă йăлăхтарса çитернĕ, халăх союзниксем çĕнтерессе шанать. Италири чи лайăх çар çыннисем те нимĕçсене килĕштерсех каймаççĕ. Корреспондент итальянецсем кĕркунех Италипе Германи хушшинчи чикке çирĕплетме пуçланине кăтартса парать.

Экономика тĕлĕшĕнчен çĕршыв питĕ йывăр положение кĕрсе ÿкнĕ.

Италири халăх выçăпа аптăрать. Çитес çывăх вăхăтсенчех Италире çын пуçне кунне 50-шар грамм çăкăр пама пуçлаççĕ, тесе палăртать хаçат.

Батт сăмахĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Российăна медицина тĕлĕшĕнчен пулăшу парас енĕпе ĕçлекен комитет Филадельфире организациленĕ митингра Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар производстви тĕлĕшпе ĕçлекен управленин членĕ Батт сăмах тухса каланă. 1941 çулти сентябрь уйăхĕнче Батт, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен делегацийĕн членĕ пулса, СССР, США тата Великобритани представителĕсен канашлăвне ССР Союзне килсе кайнă. Митингра 3.400 çын пулнă. Батт сăмахне радиопа панă.

«Иртнĕ çулти октябрĕн 30-мĕшĕнче, 3 уйăх каярах,—тенĕ Батт,—эпĕ Вашингтонри радио саракан станцине васкаттăм. Эпĕ пÿлĕме пырса кĕрсенех директор тин çеç илнĕ информаци листисене тытса ман патăма пычĕ.—Эсир Российăран килнĕ чи юлашки информацие вуланă-и?—тесе ыйтрĕ вăл. Эпĕ ăна: «Вуламан», тесе ответ патăм та вăл мĕншĕн çавăн пек ыйту пани çинчен ыйтрăм.—Нимĕçсем Мускаврa пекех,—терĕ вăл,—эпĕ эсир калама хатĕрленĕ сăмаха вуласа пăхрăм. Эсир вырăссем тÿссе тăрĕç тесе калани халĕ вырăнсăртарах пек, çавăнпа та эсир калани ыран йăнăш пулса тăрассинчен шикленетĕп. Эпĕ сире хăвăрăн сăмахăра улшăнусем кĕртме сĕнетĕп,—терĕ.

— Тĕрĕссипе каласан, эпĕ кăшт пăшăрхана пуçланăччĕ, анчах юлашкинчен çапла ответ патăм:—эпĕ хамăн шухăша улăштармастăп. Эпĕ çыннисем пурте эпĕ Мускавра хам куçпа курса ĕненнисем çинче никĕсленсе тăраççĕ, вырăссем тÿссе тăма пултарассине эпĕ халĕ те ĕненетĕп,—терĕм.

Çакăн хыççăн мĕн пулнине эсир хăвăр та пĕлетĕр. Вырăссем, хăйсен территорийĕн кашни дюймĕшĕн çапăçса, нимĕçсене Мускав оборонин инçетри хĕррисем патне хăваласа ячĕç. Ноябрь уйăхĕнче нимĕçсем хăйсем çапăçăва кĕртме пултарнă пур тĕрлĕ хĕçпăшалсенчен те вырăссем çине персе, бомбăсем пăрахса тăчĕç. Вырăссем çине нимĕçсен никам çĕнтерейми тесе шутланнă çарĕ тапăнса пынă. Çав çар питĕ хăрушă вăйпа, нимĕн шеллемесĕр, пĕр çĕршыв хыççăн теперне пусарса пынă. Вырăссем питĕ йывăр положение кĕрсе ÿкнĕ. Çакнашкал положенире ытти çĕршывсен çарĕсенчен нумайĕшĕсем е парăннă пулĕччĕç, е çавтери сапаланса кайса урăх хирĕç тăрайми пулнă пулĕччĕç. Анчах та вырăссен капитуляци тăвас шухăш пулман».

Батт вырăссен снабженийĕпе коммуникацийĕсене çавтери лайăх организациленĕ пирки нимĕçсем вĕсене аркатма пултарайманнине палăртнă. Вырăссен çар руководствин ăсталăхне пула гитлеровецсен тактики ăнăçлă пулман. Çавнашкалах тата вырăссем шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен те çÿлте, çирĕп тăраççĕ.

— Российăри халăх хушшинче,—тенĕ Батт,—хăраса ÿкни палăрмасть. Российăра «пиллĕкмĕш колонна» çук. Хальхи вăхăтра вырăссен наступлени тăвакан войскисем нимĕçсене халран ярса пыраççĕ. Вырăссем хăйсен мĕнпур хĕçпăшалĕсене ĕçе ярса, хăйсем валли малалла каймалли çулсем уçса пычĕç. Çакăнта вĕсем, хăйсен ăсталăхĕпе, паттăрлăхĕпе усă курса, нимĕçсене чакмалла турĕç.

Иртнĕ çулти октябрь уйăхĕнче,—тенĕ малалла Батт,—эпĕ хамăрăн халăха вырăссен çарĕ валли хамăр уйăрса пама пултарнă хĕçпăшалсенчен, станоксенчен, материалсенчен пурне те ярса пама чĕнсе каланăччĕ, мĕншĕн тесен ун чухне вĕсем вырăссене питĕ кирлĕччĕ. Эпĕ халĕ хавасланса çапла пĕлтерме пултаратăп: пирĕн хĕçпăшалсенчен хăшпĕрисем çапăçура хăйсене питех те лайăх енчен кăтартса пачĕç. Вырăс çĕршывĕнче нимĕçсем Америка хурçин вичкĕнлĕхне тÿссе те курчĕç ĕнтĕ. Американ Российăна ярса панă хĕçпăшалĕ шанчăклă алла лекни çинчен манăн калама та кирлĕ мар пулĕ.

Америкăран материалсем, самолетсем, танксем тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем ярса парасси ун чухне те питĕ кирлĕччĕ, вăл халĕ те çавăн пекех кирлĕ, мĕншĕн тесен совет войскисем питĕ пысăк ăнăçусем тунă пулин те, çапах та вĕсен кашни снаряда шутра тытма тивет.

Эпир питĕ пысăк ыйтăва татса парасси умĕнче тăнине Рузвельтпа Черчилль кăтартса панăччĕ. Пирĕн хамăрăн шутлă çар материалĕсене ăçта ярса парсан вĕсем ытларах усă пама пултарассине татса памалла. Ĕнентерсех эпĕ сире çапла калама пултаратăп:—тенĕ Батт,—çак ыйтăва пирĕн материалсем гитлеровецсене ăçта пысăкрах сиен кÿме пултарнине шута илсе татса парĕç. Çакăн пек решенисене пирĕн лидерсем—Рузвельт, Черчилль, Сталин тата Чан Кай-ши татса памалла. Пирĕн заводсенче туса кăларакан хĕçпăшалсем татти-сыпписĕр юхăм пек кайма тытăниччен пирĕн татах та нумай ĕçлеме тивет-ха. Вара нимĕçсем стена çумне хĕстерсе лартнă вăхăтра мĕнле çапăçмаллине тинех пĕлĕç.

— Паян эпир кунта Российăна çар материалĕсем тĕлĕшпе пулăшу пама чĕнме пухăнман,—тенĕ малалла Батт,—мĕншĕн тесен халĕ Россия пирĕн пĕрлехлĕ ĕçе туса пырать, вăл пирĕн пĕрлешнĕ çĕршывсен тинçĕр çинчи тĕп фрончĕ пулса тăрать. Эпир кунта Российăна медицина материалĕсем тĕлĕшпе пулăшу памашкăн ытларах укçа тенкĕ пухса хамăрăн тивĕçлĕхĕн вăйлă туйăмĕсене палăртма пухăннă.

— Халĕ,—тенĕ Батт, — хамăн шухăшăмра эпĕ темиçе уйăх каярах Мускавра пысăк тивлетлĕ, реалистла çынсемпе, хăйсен ĕçне шанса тăракан, пурнăçа пĕлекен çынсемпе нумайччен калаçнине аса илетĕп. Хамăн шухăшăмпа эпĕ тин çеç çара илнĕ çамрăксене асра тытатăп. Вĕсене эпир алла хĕçпăшал тытса, хăйсен тăван çĕршывне сыхлама хатĕрленсе Мускав урамĕсем тăрăх утса çÿренине куртăмăр. Çав çамрăксем аслă шухăш-кăмăлпа хавхаланатчĕç, вĕсем çавтери çирĕп йĕрке тытса пынă пирки, хавхаланулла пулнă пирки, эпĕ çав вăйхăвата хамăн пĕтĕм чун-чĕрепе туйса тăраттăм. Хальхи вăхăтра ĕнтĕ çав çамрăк çынсенчен хăшпĕрисем фронтра Гитлера хирĕç наступлени туса пыраççĕ, оккупантсене пĕтерсе тăкас тесе хăйсен пурнăçне параççĕ, тесе шухăшлатăп. Эпĕ хам мĕн пама пултарнине вырăссене пулăшас ĕçе паратăп. Пĕрпĕр кун вырăссен госпиталĕнчен аманнă вырăс салтакĕ эпĕ илме пулăшнă медикаментсемпе эмелленсе сывалса тухассине шанса тăратăп.

Ломан çырăвĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 5-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем Нью-Йорк штачĕн губернаторĕн Ломанăн çырăвне пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: «Вырăс халăхĕ Америка халăхĕпе тата ирĕке юратакан ытти халăхсемпе гитлеризма пĕтерессишĕн пыракан аслă кĕрешÿре пĕрлешнĕ. Пĕтĕмĕшлĕ тăшмана çĕмĕрсе тăкнă хыççăн ирĕке юратакан çĕршывсен халăхĕсем тĕнчене пурин валли те ирĕклĕх тата тĕрĕслĕх туса хурас майпа çĕнетме тытăнĕç». Хăйĕн тăван çĕршывне хÿтĕлессишĕн тата хаяр та тискер фашистсене çĕмĕрсе тăкассишĕн геройла çапăçакан паттăр вырăс халăхне Ломан хăйĕн ячĕпе салам калать.

— Вырăс халăхĕ,—тенĕ çыру,—нимĕн иккĕленмелли те çук, çĕнтерет, тĕрĕслĕх тепĕр хут усал вăя çĕнтерет.

Нокс тухса калани

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 5-мĕш. (ТАСС). Сенатăн ассигновани енĕпе ĕçлекен комиссийĕн нумаях пулмасть пулса иртнĕ ларăвĕнче тинĕс флотне хĕçпăшаллантарма укçа-тенкĕ памалли закона çÿтсе-явнă чухне тинĕс ĕçĕсен министрĕ Нокс сăмах тухса каланă. Нокс хăйĕн сăмахĕнче Америкăн тинĕс-çар флочĕ умĕнче питех те пысăк тата йывăр задачăсем тăнине кăтартса панă.

— Атлантика океанĕн çурçĕр пайĕ урлă каçакан коммуникацисене сыхласа хăварас ыйтăва эпир çак вăрçăри чи кирлĕ те чи малта тăракан задачăсенчен пĕрин вырăнне хуратпăр,—тенĕ Нокс. Çав коммуникацисене хÿтĕлесе тăма вара пирĕн хамăрăн тинĕс-çар вăйĕсен чылай пысăк пайне уйăрмалла пулнă. Хальхи вăхăтра Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем умне Инçетри Хĕвелтухăçĕ тĕлĕшпе çĕнĕ, питех те йывăр задача тухса тăчĕ. Çавăнта пирĕн тĕрлĕ материалсене океан урлă 7.000 мильăна яхăн туртарма лекет. Эсир пĕлетĕр, противник Инçетри Хĕвелтухăçĕнче хăйĕн чылай пысăк активлăхне кăтартрĕ.

Малалла Нокс çапла каланă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен, хăйĕн тинĕс-çар вăйĕсене икĕ океан çине ярса, пĕр океан çинче кăна тăракан тинĕс-çар флотне хирĕç вăрçă туса пыма лекет, тенĕ. Хамăрăн вăйсене тĕреклетме пире кăштах вăхăт кирлĕ пулать. Хальхи вăхăтра хамăр алăра тытса тăракан вăйсемпе пирĕн мĕнле те пулин лайăхрах усă курмалла, çав вăйсене май килнĕ таран хăвăртрах ÿстерессишĕн тăрăшмалла.

Египет правительстви отставкăна тухни

ЛОНДОН, февралĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Египетри министрсен кабинечĕ, Сырри-паша премьер-министрпа пĕрле, пĕтĕмĕшпех отставкăна тухнă.

Лондонри хаçатсен дипломатиллĕ обозревателĕсем шухăшланă тăрăх, Египетăн Сырри-паша кабинечĕ отставкăна тухнин сăлтавĕ—Фарук корольпе унăн министрĕсем пĕр-пĕринпе килĕшменни пулса тăрать. Египет правительстви, халĕ Англипе туслă пулнине палăртас тесе, январĕн 6-мĕшĕнче Виши правительствипе çыхăну тытма пăрахнă. Анчах та çакна хирĕçлесе Египетăн çамрăк королĕ, хăйне çывăх тăракан çынсем илĕртнипе, премьер-министра Хуссейн Сырри-пашана ютçĕршывсен министрне отставкăна кăларма хушнă. Çавăн пирки ĕнтĕ Сырри-пашапа пĕрле пĕтĕм правительство отставкăна тухнă. Египетри правительство кризисĕ çинчен калакан хыпара Лондонра хапăл туса йышăнман, мĕншĕн тесен Сырри-паша Англипе Египет хушшинчи çыхăнусен тĕлĕшпе тунă мĕнпур ĕçсене Лондонра питех те хаклаççĕ.

Фарук король сенат председательне Мухаммед Махмуд Халиль-бея çĕнĕ кабинет тума хушнă.

Турци премьер-министрĕ Сайдам радио тăрăх тухса калани

СТАМБУЛ, февралĕн 4-мĕш. (ТАСС). Турцин премьер-министрĕ Сайдам радио тăрăх сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çапла палăртнă: «Тĕнчери кризис пуçланса кайнă тапхăртанпа Турцин тулашри политики çак кризисăн малтанхи кунĕсенче йышăнса хунă тĕп принципсем çинчех никĕсленсе тăрать, вăл халĕ те нимĕн чухлĕ те улшăнман». Сайдам 1939 çулти сентябрь уйăхĕнче пуçланса кайнă вăрçă хальхи вăхăтра Африкăна, Азие тата Америкăна ярса илнине кăтартса панă. Вăл тĕнчипе саралнă чăн-чăн пушар пулса тăчĕ,—тенĕ Сайдам.—Вăрçă инкек-синкекĕ вăрçа хутшăннă çĕршывсенче кăна мар палăрать. Вăрçă ытти çĕршывсене те асаппа нуша кÿрет. «Вăрçă пушарĕ пирĕн алăк умне çитсе тăнине пирĕн манмалла мар,—тенĕ Сайдам.—Пирĕн тăван çĕршыва йĕри-тавраллă вăрçă пушарĕн çулăмĕ хупăрласа тăрать. Лару-тăру мĕн тери йывăррине ăнланса илес тесен тата яланах сыхăлăхлă тăрас тесен, пирĕнтен никамăн та çавна манма юрамасть».

Вăрçă халĕ Турци чикки урлă каçман-ха, çавăнпа та Турци гражданĕсем йĕркеллĕ пурнăçпа пурăнма пултараççĕ, тесе шутлани питĕ пысăк та хăрушă йăнăш туни пулĕччĕ, тенĕ малалла Сайдам. «Халь пулса пыракан тĕнче вăрçи, — тенĕ вăл, — хăçан, ăçта тата мĕнле вĕçленесси паллă мар-ха. Çак вăрçă хăрушлăхĕ умĕнче пирĕн тĕп принцип, вăраха яма юраман принцип—нацилле оборона пулса тăрать. Пĕр енчен, сăмах кунта нацие хÿтĕлесси çинчен, тулашран килсе пирĕн пурнăçăн вучахĕсене, пирĕн ирĕклĕхе, пирĕн никама пăхăнманлăха хăратса тăма пултаракан пур тĕрлĕ хăрушлăхсенчен те хÿтĕлесси çинчен пырать. Тепĕр енчен, сăмах кунта тĕнчери кризис пирĕн çĕршывăмăра катастрофа кÿрессине кирлĕ вăхăтрах сирсе ямалли мерăсем йышăнасси çинчен пырать». Сайдам нацин мĕнпур ресурсĕсене мобилизацилеме кирлине, «кирек епле инкек-синкекпе йывăрлăхсене те чăтма хатĕр тăма» кирлине кăтартса панă.

Хăйĕн сăмахне вĕçленĕ чухне Сайдам «Нацие хÿтĕлесси çинчен калакан закона» кĕртнĕ улшăнусем çинче чарăнса тăнă. Çак улшăнусем, — тенĕ Сайдам,—пирĕн çĕршыва урăх çĕршывсенчен илсе килнĕ пурлăхсене тата хамăр çĕршывра тăвакан пурлăхсене тĕрĕс тивĕçлипе валеçсе тăма май памалла, çавнашкалах тата халăха çаратнипе уйрăм çынсене пуйтарма май памалла мар.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 4-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Филиппинра февралĕн 2-мĕшĕнче çĕрле Японин войскисем Батаан çурутравĕн (Лусон утравĕ) хĕвеланăç çыранĕсем çине икĕ хутчен анса ларма хăтланнă, анчах вĕсен ĕçĕ пĕринче те ăнăçлă пулман. Тăшман чылаях пысăк çухатусем тÿснĕ. Анса ларма хăтланнă группăсем пĕри те çыран хĕррине çитеймен.

Американ торпеднăй катерĕ Манила заливĕн районĕнче çĕрлехи çапăçура Японин çар карапĕ çине торпеда янă.

Японин подводнăй лодки Американ транспортне торпеда ярса шыва путарнă. Команда составĕнчен 152 çын хăтăлса юлнă, ытти 56 çын çинчен ним палли те çук.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 4-мĕш. (ТАСС). Англи командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Япони авиацийĕ Сингапур утравĕ çине темиçе хутчен вĕçсе пырса тапăннă, хăшпĕр сиенсем кÿнĕ.

Паян тăшман икĕ хутчен Бирмăн центральнăй пайĕнчи аэродрома атакăланă.

Англи авиацийĕ паян кунĕпех противникăн территорийĕ çинче разведка туса çÿренĕ тата çĕр çинчи войскăсене пулăшса противникăн позицийĕсене ăнăçлăн атакăланă.

Австрали авиацийĕ февралĕн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Рабаул портĕнче (Çĕнĕ Британи утравĕ) Японин суднисем çине бомбăсем пăрахнă. Японин пĕр судни çине бомбăсем тĕл ÿкнине палăртнă.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 4-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: февралĕн 3-мĕшĕнче Япони авиацийĕ чылай объектсем çине бомбăсем пăрахнă. Пуринчен ытла вĕсем Сурабая, Маленга тата Мадиоена атакăланă. Сурабайра японецсем 3 истребитель тата 2 бомбардировщик çухатнă. Голланди Индийĕн авиацийĕ те чылай çухатусем тÿснĕ, анчах та татăклă даннăйсем халĕ çук-ха.

Балик-Папан районĕнче (Борнео утравĕн хĕвелтухăç çыранĕнче) çапăçу чарăнман, халĕ те пырать.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, февралĕн 4-мĕш. (ТАСС). Официальнăй сведенисем тăрăх, Борнео утравĕн çурçĕр-хĕвелтухăç çыранĕсенче кĕрешекен Япони войскисем январĕн 21-мĕшĕнче Товао хулине (Торакан утравĕнчен 60 миля çурçĕрелле) йышăннă.

Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, февралĕн 5-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă черетлĕ коммюникере çапла каланă: февралĕн 4-мĕшĕнче Англин патрулĕсемпе куçса çÿрекен колоннисем фронт тăршшĕпех кĕрешнĕ. Англин истребительнăй авиацийĕ Англин тинçĕр çинчи малти чаçĕсене пулăшнă, бомбардировщиксем çав вăхăтра тăшманăн колоннисене ăнăçлăн атакăланă, противникăн моторизованнăй средствисене нумай пĕтерсе тăкнă.

Японипе Китай хушшинчи вăрçă

Кăнтăрти Китайра çапăçусем Кантонран хĕвелтухăçнерех выртакан районри Вейчжоу—Боло участокĕнче пыраççĕ. Фронтăн çав участокĕнче наступлени тума хăтланакан Японин чаçĕсене хирĕç Китай войскисем хăюллăн çапăçаççĕ.

Хубэй провинцин çурçĕр пайĕнчи чылай районсенче Кантон—Ханькоу чугунçулĕ тăрăх вырăнти уйрăм çапăçусем пыраççĕ.

(ТАСС, февралĕн 4-мĕш).

Сингапур

(Справка)

Англи войскисене Малайăран илсе тухса кайнă хыççăн Сингапур утравĕ çинче Англин çав базишĕн тÿрремĕнех çапăçу пуçланса кайнă.

Сингапур вăл Англин Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири чи пысăк та чи кирлĕ тинĕс-çар тата авиаци бази пулса тăрать, çакăнпа пĕрлех вăл суту-илÿн питĕ те пысăк центрĕ. Вăл Малаккски çурутравăн кăнтăрти вĕçĕ патĕнчи пысăк мар утрав çинче, 27 миля сарлакăш те 14 миля тăршшĕ утрав çинче, вырнаçса ларнă. Çав утрава материкран ансăр Джохор проливĕ уйăрса тăрать, Голланди Индийĕн утравĕсенчен ăна Сингапур проливĕ уйăрса тăрать. Сингапур утравĕн территорийĕ сăртлă территори, вырăнĕ-вырăнĕпе вăл джунгли пулса тăрать. Унăн чи çÿллĕ вырăнĕ тинĕс шайĕнчен 500 метр çÿлте тăрать.

Сингапур хули Сингапур утравĕн кăнтăр хĕрринче ларать. Вăл чи пысăк портсенчен пĕри пулса тăрать, çак порт вăл — Инди океанĕпе Лăпкă океан шывĕсем пĕрлешнĕ вырăнта. Сингапур çумĕпе суту-илÿ çулĕсем тата чи кирлĕ стратегиллĕ коммуникацисем иртсе пыраççĕ, вĕсем Азин хĕвелтухăç хĕрринчен хĕвеланăçнелле — Индие, Африкăна тата Европăна каяççĕ, хĕвеланăçĕнчен каялла — Азин хĕвелтухăç хĕррине илсе пыраççĕ. Сингапур урлă вăйлă суту-илÿ пырать, суту-илÿн пĕтĕм таварçаврăнăшĕ çулталăкне 750 миллион доллара çитет. Вăрçăччен Сингапур портĕнче вăтамран 250 парохода яхăн (суту-илÿ парохочĕ) тăнă, вĕсем çĕр чăмăрĕн тĕрлĕрен пункчĕсене çÿренĕ. Сингапур утравне материкпа 20 метр сарлакĕш дамбăпа пĕрлештернĕ, дамба тăрăх чугунçул хывнă, чугунçул çурçĕрелле пĕтĕм Малайя урлă Бангкока (Таи) çитиччченех каять. Сингапур хулинче пурĕ 700 пин çын пурăнать, унта европеецсем, китаецсем тата йышлăнах мар малаецсемпе японецсем пурăнаççĕ.

Сингапур утравĕ çинчи тинĕс-çар базине тĕнчери империализмлă пĕрремĕш вăрçă пĕтсен çеç тума тытăннă. Унта çыран хĕррисенче питĕ вăйлă укреплениcем туса лартнă, çав укрепленисене 25 миля инçете пеме пултаракан 18 сантиметрлă тупăсен батарейисене вырнаçтарса лартнă. Сăрта чăтлăхсенче зенитнăй тупăсем вырнаçтарса лартнă, аэродромсем, типĕ доксем, мастерскойсем, боеприпассен склачĕсем тата ытти те туса лартнă. Сингапура тата Англирен ишсе çÿрекен питĕ пысăк док илсе пынă, çав дока хальхи вăхăтри чи шултăра çар карапĕсемех вырнаçма пултараççĕ. Тĕп тинĕс-çар бази Сингапур утравĕн çурçĕр çыранĕ хĕрринче, Селатарта вырнаçса тăрать. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Кÿпеш ялсоветĕнчи Хурапур ялĕнче хваттерте тăнă чухне КĔСРЕ тухса тарнă,

тĕсĕ—турă, çамки çинче—шурă, 19 çулта, çÿллĕшĕ—137 сантиметр.

Пĕлекенсене çак адреса пĕлтерме ыйтатăп: Чăваш АССР, Ишлей районĕ, Энтимĕр ялĕ, „Комбайн" колхоз правленине.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—20, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналĕн — 8—23, «Ленин çулĕпе» журналĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 43

Гор. Чебоксары, типография № 1. Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 260. Ф. 6. 58_84 п. л.